Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

37 (7780) № * Шăмат кун, 2010 çулхи çу (май) уйăхĕн 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Район уй-хирĕсенче

## Çĕнĕ трактор çĕр улми пуссинче



условисемпе тан пыма тăрăшмалла. Пирĕн кашниййĕнех çурхи уй-хирти ĕç планĕсем паллă.

Хуçалăх ертӳçи çак кунсенче хиртен каймасть, кашни ĕçе хăй йĕркелеме тăрăшать.

– Çĕр улмине малтан 60 гектар лартма планланăччĕ пулсан, вăрлăх çитсе пынине кура унăн лаптăкне 70 гектара çитерес тĕллев çуралчĕ. Ӳсен-тăрана сеттер кўрекен чир-чĕрпе тата сăтăрçăсемпе кĕрешессине те паянах пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшатпăр, – каласа ăнлантарать Юнкă ял тăрăхĕн çĕрĕсем çинче икĕ çул каялла йĕркеленнĕ «ВаСем» чикĕллĕ пăхса.

– Тулли хăватпа ĕçлеме пур условисем те пур. Çурхи кун çулталăк тăрантарнине шута илсе хăвăртрах акса лартса пĕтермелле çеç. Тулли кунпа ĕçлеме механизаторсем (ытларахăшĕ çамрăксем) çитни те хавхалантаракан пулăм, – терĕç çĕр улми лартнă çĕрте ĕçлекен Ю. Терентьев, И. Соколов, Л. Мешков, А. Илугин тата А. Самушков **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**.

«Иккĕмĕш çăкăр» пуссинчен пирĕн автомашина тапранса тухрĕ. Çĕр хатĕрлекен тата çĕр улми лартакан агрегатсем хыçĕнче тăракан ту-

«Çĕнĕлĕхсене алла илмесĕр ял хуçалăхне тухăçлă аталантарасси иккĕленӳллĕ», – терĕ хирте ĕçлекенсем патĕнче пулнă хыççăн унта çĕр улми лартассипе ĕçсем епле пынине пĕтĕмлетсе «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи В. Кондратьев.

Эпир хире çитнĕ çĕре кăнтăр апачĕ те çывхаратчĕ. «Иккĕмĕш çăкăр» пуссинче вара хĕрӳ ĕç пырать. Кашни ĕçчен, агрегат хăйĕн ĕçне пĕлсе пурнăçлани инçетри тўперен курăнчĕ. Уйрăмах пысăк калăпăшлă кустăрмаллă трактор хирте унталла-кунталла хăвăрт çӳрени тĕлĕнтерчĕ. Çывăха пынăçемĕн ĕç шавĕн сасси ӳсрĕ кăна.



– Çур акире кăçал пирĕн пĕтĕмпе 600 гектара яхăн ял хуçалăх культурисем акмалла-лартмалла. Хуçалăх акана хатĕр кĕтсе илчĕ. Ăна хатĕрленсе «Нью Холланд» кустăрмаллă трактор туянтăмăр. Унăн пулăшăвĕпе пĕрремĕш меллĕ кунпах хире тухрăмăр, – каласа парать кусне уй инçĕшĕнчен илмесĕр ют çĕр-шыв трактор штурвалне алла илнĕ Алексей Матвеев механизатор. – Çурхи кун вăл пире кĕтмест, çĕр ĕçченĕн хăйĕн çут çанталăк ыйтнипе тата вăл паракан яваплăхлă общество ертӳçи В. Кондратьевпе минераллă удобрени сапакан А. Илугин **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре А. Матвеевпа юнашар сылтăмра)** ĕçĕ çине кăмăллăн сан инçене каять. Çӳлте тăракан хĕвел вара çурхи кашни сехетпе туллин усă курма ыйтать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Майăн 15-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире чун ăшшине, канăçлăхпа килĕшĕве, сутă пурнăçпа вĕççĕр юратăва пĕрлештерсе тăракан Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕпе саламлатăп!

Çирĕп те туслă çемье кашни çыннах вăй-хăват парать, ура çинче çирĕп тăрса малалла аталанма тата çĕнĕ ӳсĕмсем çĕнсе илме пулăшать. Çемье ăшшине туякансем темĕнле йывăрлăхра та хăйсене пулăшакан пуррине çирĕп туяççĕ. Çемьери шанчăк туйăмĕ пирĕн пурнăçа савăнăç, ĕненӳ кĕртет, ырă шанчăк çуратать.

Чăваш Енре ачасемпе çамрăксене аслисене хисеплеме, тăван тавралăха упрама вĕрентсе воспитани парасси – çемьерен çемьене куçакан ырă йăла. Республикăри демографи политики амăшлăхне пулăшу парас тата çемье институтне çирĕплетес тĕллевлĕ. Юлашки çулсенче нумай ачаллă çемьесен хисепĕ ӳсни малашлăха шанчăклă пăхтарать. Кăçал кăна 3 е ытларах ача пăхакансем 400 çемье таран йышланчĕç. Паян ЧР территорийĕнче хальхи кун йĕркинчи ыйтусене пăхăнса тăракан медицина учрежденийĕсемпе социаллă йăла предприятийĕсем ĕçлеççĕ. Ачасене усрава илме пулăшакан çĕнĕ механизмсем вăй илеççĕ.

Иртнĕ кунсенче кăна «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафон иртрĕ. Вăл 7 миллион тенкĕ пуçтарма мехел пачĕ. Çак укçа-тенкĕ актуаллă ыйтусене татса пама пулăшассинчен иккĕленместĕп. Ачасем пирки шутлакансемшĕн республика малашлăхĕ те ют марах.

Сире пурсăра та сывлăх, телей, юратупа ăнăçу, килĕшӳ сунатăп.

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çемье, атте-анне килĕ кашни çыннăн пурнăçĕнче çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн пурнăç епле пуласси йăлтах çемьерен пуçланать. Ача çемьере пур енлĕн аталанса, ырăпа усала уйăрма, ырă ĕçсем тума хăнăхса ӳсет. Ытти мĕн пур ырă енсем те йăлтах çемьерен пуçланаççĕ: çемьерех ачасем ĕçлеме, ватăсене хисеплеме, яваплăха туйма, сывă пурнăç йĕркине хăнăхса ӳсеççĕ. Никам ăнланмасан та, никам пулăшмасан та, никам каçармасан та, тăван килте, çывăх çынсем сана ăнланаççĕ, пулăшаççĕ, каçараççĕ. Кунта сана яланах кĕтеççĕ.

Çемье телейĕ вара пирĕнтен хамăртанах килет. Килте пĕрпĕрне ăнланма, каçарма пĕлмелле пирĕн. Туслă çемьере йывăрлăха чăтса иртерме, çĕнтерме те çăмăлтарах. Ашшĕамăшĕн ăшшине, юратăвне туйса ӳсекен ачасем йывăрлăха та çĕнтерме пултараççĕ, ырă кăмăллă пулаççĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупаççĕ. Ачаллă çемьесене пулăшас ыйту çине Раççей, Чăваш Республикин Правительстивисем тимлĕ пăхаççĕ. Çемьесене патшалăх енчен пулăшни те çаках кăтартса парать.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатăп. Эсир ачăрсемшĕн ырă тĕслĕх пуласса та шанатăп. Килĕрте яланах юрату, килĕшӳпе тату пурнăç, телей хуçалантăр. Ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

Календарьти паллă кун

## Ăста вăрманçă

Çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Енĕн паллă вăрманçи Бронислав Ильич Гузовский çуралнăранпа 150 çул çитрĕ. Ăста вăрманçă 1860 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Украинăри Ровно хулинче çуралнă. Ачаллах тăван тавралăха юратса ӳснĕ каччă училище хыççăн тĕп хулари вăрман академийĕнче (халĕ – Мускаври К.А. Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕ) вĕреннĕ, тăрăшулăхĕпе вăрман ĕрчетес ĕç кандидачĕн степеньне илнĕ. Унăн чылай сăмахĕ паян та вăйне çухатман. Тĕслĕхрен, Бронислав Ильич çапла каланă: «Йĕкел акни е калчасем лартни кăна вăрман культуришĕн çителĕксĕр. Юман вăл пĕчĕк ача пек, тăтăш тимлĕх ыйтать».

Бронислав Ильич Гузовский вăрманçăна асăнса 1968 çулта Ильинка лесничествинче асăну палăкĕ лартнă, Шупашкарти пĕр урама унăн ятне панă.

Паян республикăра Б.И. Гузовский çуралнăранпа 150 çул çитнĕ ятпа наукăпа практика конференцийĕ пулать. Çак кунах Ильинкăри вăтам шкулта Б.И. Гузовский ячĕллĕ музей ĕçлеме тытăнать.

**Г. СИМАКОВ,**
**çут çанталăка сыхлакан специалист.**

Çур аки – 2010

## Ĕçсем кал-кал пыраççĕ

Çурхи уй-хир ĕçĕсем пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче финишалла çывхараççĕ. Унта та кунта тырпулпа пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтереççĕ, хастартараххисем çĕр улми лартас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Анчах кĕр çитессĕн тулăх тухăç илессишĕн çанă тавăрса ĕçлемелли те пайтах-ха. Çурхи кун çултаталăк тăрантарать теççĕ мар-и?

Хире тухса агротехникăна пăхăнса ака ĕçĕсем иртерме пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кăçал пур вăйсене те мобилизацилерĕç. Тимлени харама каймарĕ. Çу уйăхĕн 14-мĕшĕ тĕлне район çуртрисем акмалли плана (9291 гектар) 98 процент пурнăçларĕ. Кĕрхи культурăсен хĕл сиввипе пĕтнĕ лаптăкĕсен ытларах пайне те çуртрисем йышăнма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Юлнă гектарсене пĕр çул ӳсекен курăксемпе çĕр улми йышăнмалла.

Çĕр улми тенĕрен, район ăна ĕнерхи кун тĕлне 823 гектар çинче (41,5 процент) лартса хăварнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене вара 1080 гектар çинче (62,4 процент) акнă.

«ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество 4 гектар çинче пахча çимĕç лартнă та ĕнтĕ. Çурхи ака-суха ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн кăçал вăл районĕпе 55 гектар пулмалла.

**Хамăр инф.**

Çамрăк армеецсен вăййисем

## Çамрăк ăру хăйне тĕрĕслет

Хорнуй ял тăрăхĕнчи илемлĕ вăрман уçланкинче майăн 13-14-мĕшĕсенче районти çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» çарпа спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Пурĕ 400-е яхăн вĕренекен хутшăнчĕ вăйăсене.

Патриотизмла воспитани парас ĕçре çак вăйăсем питĕ пĕлтерĕшлĕ. Унти ăмăртусене хатĕрленнĕ май яшсемпе хĕрсем тăван çĕр-шывăн историпе культурине тепĕр хут тишкереççĕ, çакăнпа пĕрлех çирĕп ăс-хакăлпа тӳсĕмлĕх кăтартаççĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчи «Зарница» тата «Орленок» командисем, çарпа патриот клубĕсем хушшинчи чи вăйлă та хастар командăсем республика вăййисенче район чысне хӳтĕлеме тивĕç пулĕç.

Йăлана кĕнĕ вăйăсем кашни шкул ачинех килĕшни паллă ĕнтĕ. Тĕрлĕ конкурс-викторинăра тĕрĕслеççĕ хăйсене ачасем: «Вăй тата çаврăнăçулăх», «Шывра ишесси», «Карттă – манăн юлташ» тата ытти нумай-нумай конкурсра. Малашне çакă пĕтĕмпех пурнăçра кирлĕ пулать. **Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă аннене, мамакпа кукамая, хаклă тăванăмăра – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Валентина Мефодьевна ИВАНОВАНА** 70 çулхи юбилейпа чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр.

Ырă кăмăлушăн, тараватлăхушăн тав тăватпăр. Пурнăç çулĕпе утма вăй-хал, çирĕп сывлăх сунатпăр. Турă сана чир-чĕрпе усалтĕселрен сыхлатăр, çывăх çынсен чун ăшши ан иксĕлтĕр. Çăкăр-тăвар сĕтел çинчен ан таталтăр, кĕреку тăванусемпе яланах йышлă пултăр. Ачусемпе мăнукусем пурнăç тăршшĕпех савăнтарччăр.

**Ырă сунса та саламласа: ывăлĕсемпе хĕрĕсен çемйисем, çывăх тăванĕсем.**



Пирĕн хаклă та юратнă çыннăмăра – Хурăнкасси ялĕнче пурăнакан **Николай Прокопьевич Башкирова** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сурпан пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăват, çут тĕнче илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, вĕççĕр-хĕрсĕр телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Татах та нумай çул пире савăнтарса пурăн. Тайма пуç сана пуриншĕн те, тавах эсĕ пурришĕн.

**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе мăшăрĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Самых родных и близких людей **Алевтину Ивановну и Алексея Петровича Волковых** поздравляем с бумажной свадьбой!

Дорогие Алевтина и Алексей!

Вы уже знаете, что семейная жизнь - это не только праздники, но и будни, иногда открывающие перед вами пропасть проблем, в которую можно упасть и разрушить семейное счастье. И только любовь - этот мостик к душам друг друга - оберегает вас от падения.

И мы поздравляем и желаем вам, чтобы ваша любовь была прочнее листа бумаги и спасала вас на протяжении всего жизненного пути от всех невзгод!

**С самыми искренними поздравлениями и с наилучшими пожеланиями Волковы и Тихоновы.**